## Владимир АГЕЕВ:

# «ЮРАТУСĂР КУРĂК ТА ӲСМЕСТ...»



***Художниксем çӳл тӳперен вĕçсе анмаççĕ. Вĕсем — çĕр çинчи турă ачисем. Çĕр чăмăрне пултарнă чухне турă ăна илемлĕ, хăйне евĕрлĕ мăнаçлă кăтартас тесе, хăйĕн ăсталăхне, тĕссен шерепине шеллесе тăман. Çынсем пуçланса кайсан та вăл вĕсене çак тĕнчене хăйĕн куçĕсемпе кăтартасшăн пулнă, хăй суйласа илнĕ çынсене тĕлĕнмелле пултарулăх панă. Ахаль çынсенчен вĕсем «сăрăсен чĕлхин» вăрттăнлăхĕсене ăнланнипе уйăрăлса тăраççĕ. Çак туйăмлăх вĕсем хăш наци çынни е ӳчĕ мĕн тĕслĕ пулнинчен те килмест. Турă пани ĕнтĕ. Çакăн пек «турă панă чĕлхе» чăваш художникĕн Владимир Иванович Агеевăн та пур. Хăйĕн ырми-канми ĕçĕшĕн вăл чи пысăк хисепе тивĕçнĕ — ăна «Чăваш халăх художникĕ» сумлă ят панă. Хамăн чылай юлташ пекех, эпĕ те унăн хăйне евĕрлĕ таланчĕ умĕнче пуç таятăп, ăна чăваш генийĕ вырăнне хурса хаклатăп.***

**— Владимир Иванович, художник тени Сирĕншĕн мĕне пĕлтерет? Пурнăç тĕшшин пĕлтерĕшĕ е çăкăрлăх укçа-тенкĕ ĕçлесе илмелли ĕç?**

— Çамрăкрах чухне эпĕ кун пирки шухăшласах та кайман. Хырăм выçă чухне çеç еплерех укçа ĕçлесе тумалли çинчен шухăшланă: учитель ĕçĕнче эпĕ вăй хунă, хаçат-журнал валли карикатурăсем ӳкернĕ. Çапла пырса кĕнĕ те ĕнтĕ манăн алла укçа-тенкĕ. Çакăнпа пĕрлех тăтăшах искусствăпа кăсăкланнă, çулсем иртнĕ май пуçĕпех профессиллĕ художник ĕçĕн «аварне путрăм». Вăл маншăн яш чухнех çывăхчĕ, майĕпен вара пурнăçпа вилĕм тĕллевĕ тата шухăшĕ пулса тăчĕ. Художник пулса ытларах та ытларах ĕçленĕ май ман ума чăн пурнăçа ăнланса илсе палăртнин тĕрĕслĕхĕ тухса пырать, уçăмланать. Çакă пĕтĕмпех манăн чун-чĕрене, тавракурăма пурăнакан тĕнчере çĕнĕлĕхсем шыраса тупма пулăшать. Çавăнпах ĕнтĕ манăн ĕçсене куракансем те ăнланаççĕ, вĕсемпе интересленеççĕ. Нумай вăхăт пултарулăх ĕçĕпе пурăнса эпĕ ытти художниксем асăрхаман япаласене те курма-туйма вĕрентĕм.

**— Мĕн каласшăн Эсир ку сăмахсемпе?**

— Эпĕ паянхи тата ĕлĕкхи аслă художниксен, уйрăмах импрессионистсен еткерне чăннипех тĕплĕн тĕпчетĕп. Художникăн тĕп тĕллевĕ — живописçре япалапа унăн фонне куракансем мĕнлерех ăнланассине палăртасси. Куçакан япаласене куçпа курнă пек уçăмлă ӳкерсе кăтартасси художникшăн яланах чăрмавлă пулнă: фон тăтăшах улшăнать, ӳкерекен япала вара хăй те куçăм объекчĕ. Фотоаппаратпа ӳкернĕ чухне кун пек йывăрлăхсем çук. Вăл ӳкерчĕке пĕр самантрах тĕппипех, туллин курать, çавăнпа та кун пек чухне техника ӳкерчĕкĕ пулать. Çак ыйтупа эпĕ вунă çул ĕçлетĕп ĕнтĕ. Ытти паллă художниксем те çакăн вăрттăнлăхне ăнланасшăн пулнă, анчах та унăн тупсăмне халĕ те тупаймаççĕ-ха.

**— Художниксем пирки часчасах вĕсем хăйне евĕрлĕ çынсем тенине илтме пулать...**

— Пĕлетĕр-и, художниксем вара хăйсем ыттисем пирки çавăн пекех шухăшлаççĕ. Çапăçаççĕ иккен вĕсем, ĕçкĕпе иртĕхеççĕ, мăшкăллаççĕ, вĕлереççĕ...

**— Сире çак пурнăçра ытларах мĕн илĕртет? Пулас ӳкерчĕк сюжечĕ Сирĕн шухăшкăмăлăрта мĕнлерех тĕвĕленет? Тата мĕнле тема сирĕн чуна çывăхрах: паянхи пурнăç е истори теми?**

— Мана хальхи вăхăтри чăн пурнăç истори тымарĕсенченех кăсăклантарать. Унăн пуласлăхĕ те,

аянхи пурнăç, ăна тараннăн ăнлана илесси те хумхантарать чуна. Маншăн пурте интереслĕ: политика та, наукăри çитĕнÿсем те, медицинăпа астрономи тата ытти те. Этем пурнăçĕ кĕске — пурне те пĕлсе пĕтерме çук. Эпĕ вара хамăн художник профессийĕ çинех тĕренленсе тăратăп. Рынок экономикинче художник пĕтсе пырать. Тĕслĕхрен, Америка, Франци, Англи çĕршывĕсенче чăн-чăн реализм искусствине тĕпчекен художниксем çук. Вĕсем пĕтсе пыраççĕ, кайри рете чакаççĕ. Рынок экономикинчи влаçпа патшалăх ÿнерлĕх искусствине тата литературăна мала тухма çул памаççĕ. Пирĕн, художниксен, çум куракĕ пек ÿсме тивет. Енчен те вăй илтĕмĕр пулсан, пире укçалла туянаççĕ. Тĕрĕссипе вара художниксене II Кĕтерне, I Александр патшасем вăхăтĕнчи пек ÿстермелле. Наукăпа искусствăна аталанма вĕсем ятарласа пулăшса пынă. Мĕншĕн çапла калатăп-ха эпĕ? Этемлĕх аталанăвĕ ÿссе пымалла, пĕр-пĕринпе вăрçса юн юхтармалла мар, наука çитĕнĕвĕсемпе хĕçпăшалланма усă курмалла мар. Европа цивилизацийĕн 500 çулхи аталанăвĕнче виçĕ художник кăна хăйсен ĕçĕсене халăх умне кăларас тесе пынă, кĕрешÿре чĕрĕ юлайнă, «паттăрсем» пулса тăнă: Рембрандт Веласкес, Рубенс. Ыттисем хăйсен тĕллевĕн çур çулĕнчех пуçĕсене хунă. Кунта çакăн пек пĕтĕмлетÿ тума пулать: ÿнер искусствинче хаяр та йывăр кĕрешÿ пырать, правительствăпа влаç çакна курасшăн мар. Çав вăхăтрах искусствăпа наука çыннисем çеç этемлĕхе малалла аталанма вăйхăват параççĕ, чăнлăха курмашкăн пулăшма пултараççĕ. Эпир вара халлĕхе çиетпĕр, ача çурататпăр, тата хÿтĕленетпĕр çеç. Ку вăл эпир пĕр вырăнта тапăртатса тăниех. Эпĕ чăваш халăх темипе ÿкеретĕп. Ÿнер искусстви урлă ун çинчен мĕн пĕлнине палăртатăп, унччен мĕн пулнине пĕлме тăрăшатăп. Тĕслĕхрен, историе тĕпчесех эпĕ Атăлçи Пăлхар патшалăхĕ пулнине пĕлтĕм, икĕ хутчен Пăлхар, Пÿлер хулисенче пултăм, унта тутар археологĕсен ĕçĕсене тĕпчерĕм, этюдсем турăм, Смирнов профессор Атăлçи Пăлхар пуçланса кайни пирки, унăн чĕлхи, культури пирки çырнипе паллашрăм, чăваш профессорĕ Каховский ĕçĕсене вуларăм. Археологи тĕпчевĕсем мана ĕçлеме, чăваш ĕçне тума, хамăн произведенисене ÿкерме пулăшаççĕ.

**— Мĕнпе илĕртет-ха Сире истори теми?**

— Енчен те манăн мăн асатте кам пулнине, мĕнпе пурăннине пĕлместĕп пулсан, эпĕ хама ăслă-тăнлă çын теме пултараймастăп, хама тĕпченĕ пекех историе те тĕпчетĕп. Хăш чухне хама эпĕ çав тахçанхи иртнĕ çулсенче пурăннă пек, кайран тепĕр хут çуралнă евĕр туятăп. Мана эпĕ çар çынни пулнă пек туйăнать. Кайран вăрçă хирĕнче пуçа хунă пек. Художника тухаймасан та эпĕ çар çынниех пулăттăм пуль. Çавăн пекех, тÿрех йышăнатăп, çарамас хĕрарăмсене те ÿкерме юрататăп. Ясар тавраш мар, хĕрарăм кĕлеткин илемĕ, унăн килĕшÿлĕх гармонийĕ илĕртет мана.

**— Апла Эсир чун пĕр кĕлеткерен теприне куçать тенине ĕненетĕр?**

— Кăна никам та пĕлмест. Ку гипотеза кăна. Пĕтĕмпе этемрен килет, вăл ĕненме те, ĕненмессе те пултарать. Тĕнчере ăнлантарса пама çукки пайтах. Эпир те, авă, хамăр валли хисеплĕ ятсем, çăмăллăхсем, пуянлăх ăнлавĕ шухăшласа кăларнă. Укçашăн çеç виличчен пирĕн чун çĕнĕ кĕлеткене куçнине ĕненни лайăхрах пулĕ тетĕп. Мĕнле-ха çынсем пĕр япалана ăнланасшăн мар: пуянлăх вăл килет те каять, хăвăнпа пĕрле леш тĕнчене нимĕн те йăтса каяймăн. Чăнлăха ăнланса илме тăрăшни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Уншăн пурăнма та юрать, çакă пысăкрах хисепе те, чыса та тивĕçлĕ.

**— Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши «Древние чуваши» кĕнеке кăларчĕ. Вăл ыйтнипе Эсир, Владимир Иванович, çав кĕнекене ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ. Унти Эсир тунă сăнарсем чăн пурнăçра та шăп та шай çавсем пекех пулнине мĕнле çирĕплетме пултаратăр, ăçтан çав ĕненÿ?**

— Ку ыйтăва мана кашни утăмрах параççĕ. Юхма Мишши патне Болгарирен хăнана килнĕ ученăйсем те çавнах ыйтрĕç. Эпĕ вĕсене ун чухне çапларах хурав патăм. Илер-ха, сăмахран, пирĕн эрăччен 540 çулсенче пурăннă Аттил патшана. Вăл чăвашах пулнă. Дон юханшыв çинче, Чугаево е Кременчуг хулисен çывăхĕнче пурăннă. Парижа илнĕ, çур Италие тата Константинополе туртса илнĕ çак патша. Эпĕ хатĕр сăнарсене улăштармасăр, хамăн чăваш колоритне тата ун çинчен мĕн шухăшланине хушса хутăм. Апла пулин те унăн сăнарне нумай хутчен улăштарма тиврĕ. Халăх культурине тата историре йĕркеленнĕ лару-тăрăва шута илсе, тĕрлĕрен тум-тире, хĕçпăшала тĕпчерĕм, вĕсем çинчен тĕрлĕрен халапсем вуларăм, фактсем пухрăм, анчах каллех археологи тĕпчевĕсем кăна пулăшрĕç. Сăмах май, вăл хитре хĕрсене питĕ юратнă, питĕ вăйлă, тавăрах чунлă, чее, кăра чунлă, пултаруллă патша пулнă. Пур çапăçура та алла хĕç тытса малта пынă — çак фактсене пĕлнĕ хыççăн эпĕ вăл мĕнле çын пулнине, унăн характерне куртăм. Чăвашсен Алмуш патши вара пачах урăхла çын пулнă. Вăл пирĕн эрари 920-мĕш çулсенче пурăннă. Ун çинчен Али Ахмед ибн Фадлан нумай çырса хăварнă. Алмуш патша кил-çурт çынни пулнă, тухса çÿреме юратман, ислам тĕнне йышăннă, ислам çырулăхĕпех усă курнă, мăсăльманла тăханнă, мечĕтсем тума пуçланă, ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен аталанса пыма, тĕнчене тухма тăрăшнă. Хамăн ÿкерчĕкре эпĕ ăна чалмапа ÿкертĕм.

**— Эпир хамăр пирки тăтăшах сăпайлă, ĕçе юратакан, лăпкă, ытти халăхсене нихăçан та тапăнман, ĕмĕрĕпе пурăннă вырăнсене те вăрçа пула пăрахса хăварнă тесе калатпăр. Çакăн пирки Сирĕн шухăша пĕлес килет...**

— Владимир хули патĕнчи вырăс летописĕнче çапла çырса хунă: «1161 çулта пăлхар çар çыннисемпе дружинисем вырăс çĕрĕсене тапăннă, выльăх-чĕрлĕхе, хĕрарăмсене, ытти пуянлăха пĕрле илсе кайнă. Вырăссен питĕ вăйлăн хирĕç тăма тивнĕ. Нихăшĕ те çĕнтереймен хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Вырăссем çак çапăçăва халалласа «Нерль юханшывĕ çинчи Покров» ятлă чиркÿ туса лартнă. Çакна палăртса хăварас килет, чиркÿ кирпĕчĕсем çинче тăмхасем пур, вĕсем вуннă, вĕсем çинче руна паллисем. Чиркĕве чăваш ăстисем хăпартнă. Çакна вырăссем те йы-

шăнаççĕ. Историрен чăвашсем чăннипех хастар халăх пулни паллă. Çапах та чăвашсемпе вырăссем пĕрле пурăнасшăн пулнă. Андрей Боголюбский патша пăлхар хĕрне качча илнĕ. Чăваш тата вырăс халăхĕсем пĕр-пĕринпе ăс-хакăл енĕпе те, культурипе те питĕ тачă çыхăнса тăнă тесе шухăшлатăп. Вырăссем чăваш сăмахĕсене йышăннă тата çĕр ĕç культурине вĕренсе пынă.

**— Сирĕн ӳкерчĕксем ыттисен ĕçĕсенчен питĕ уйрăлса тăраççĕ. Эсир хăвăра евĕрлĕ ӳкеретĕр. Арçынсемпе хĕрарăмсем ӳт-пĕвĕ хăнăхнă калăпран уйрăмах, кĕлетке формисем, çаврака, вĕсенче фантастикăлла япаласем нумай. Мĕншĕн-ха Эсир çак стиле суйласа илнĕ?**

— Çамрăк чухне эпĕ хамăн яшкĕрĕм ăсĕпе арçынсемпе хĕрарăмсене ăнланса илме тăрăшрăм. Хĕрарăмсем суйни мана яланах тĕлĕнтеретчĕ. Вĕсене пĕтĕм чуна уçса паратăн, хăйсем пирĕн çине сураççĕ кăна, самантрах сутаççĕ, кирлĕ пулсан, шăтăк кимме лартса яраççĕ. Халĕ ăнлантăм ĕнтĕ: суйман хĕрарăм хĕрарăм та мар. Мĕншĕн-ха çак тĕнчере арçынпа хĕрарăм хушшинче килĕшӳлĕх çук? Хĕрарăмсем темле чунсăрскерсем. Çавăнпах эпĕ вĕсене çапла ӳкеретĕп те. Чи малтанах эпĕ япала тĕшшине ăнланма тăрăшатăп, кайран вара унăн тивĕçлĕ формине, калăпăшне, пĕлтерĕшне палăртатăп. Пейзаж ӳкернĕ чухне вара шухăшламалла, натурăна, умри объекта ăнланмалла, туйса тăмалла. Ӳкернĕ чухне каçăхса кайса ĕçлетĕн. Ку вăл çутçанталăкпа хăйне евĕр кĕрешни. Тĕрĕслĕхе çĕнсе илессишĕн тăрăшни, çунни.

**— Владимир Иванович, Сирĕн хальхи мăшăрăр çамрăкскер теççĕ тата вăл шучĕпе виççĕмĕш...**

— Çапла, мăшăрăм çамрăк манăн. Христос çулĕ чухлĕ пирĕн хушăмăрти уйрăмлăх. Юратса пăрахнă чухне эпĕ паспорта та, пĕлӳ шайне те, пуянлăха та пăхмастăп. Пĕрремĕш çемье мăшăр айăпĕпе саланчĕ, иккĕмĕш арăм йывăр чирлесе çĕре кĕчĕ. Вăл питĕ чипер те ăслăскерччĕ, итлетчĕ, шухăшлама пĕлетчĕ. Тĕлĕнмелле юрату туйăмĕччĕ пирĕн — турă панă юрату. Ун пек хĕрарăмсем çĕр çинче пулмаççĕ тесен те йăнăш мар, чăн-чăн пирĕшти пекехчĕ. Пĕтĕм пурнăçне мана халалланăччĕ вăл, яланах пулăшса пыратчĕ. Мăшăр вилĕмне питĕ йывăррăн чăтса иртертĕм. Виççĕмĕш мăшăрăма вара эпĕ çĕре кĕнĕ арăмăн иккĕмĕш сыпăкĕнчи йăмăкĕнче тупрăм. Алевтинăна эпĕ пурнăç çулĕ çине тăратрăм. Вăл манăн шухăш-ĕмĕтĕме пайлать, ăнланать мана, пулăшса пырать.

**— Мĕне пĕлтерет Сирĕншĕн юрату? Пултарулăх кăвайтне тытса тăма кирлĕ-и çак туйăм?**

— Хитре хĕрарăма çеç шырас, юратас шухăш нихçан та пулман. Пĕтĕмпех ăнсăртран пулса тухатчĕ. Эпĕ пĕр çынна çеç юрататăп. Урăххипе улăштарнине сутăнни вырăнне хуратăп. Ун пеккине тӳсме пултараймастăп.

**— Юрату ĕçре хавхалану кӳрет-и?**

— Юрату тĕлĕнмелле пысăк вăй. Вăл гравитаци энергийĕ пек вĕçĕ-хĕррисĕр. Унсăр пурнăç та, искусство та çук. Юратусăр курăк та ӳсмест. Çак асамлă туйăм мана чи паха ӳкерчĕксене тума яланах пулăшса пынă.

**— Владимир Иванович, Эсир сакăр çул ĕнтĕ тивĕçлĕ канура. Халăх художникĕ, çĕршер ӳкерчĕк хайлавçи темелле, анчах та пуян тесе ниепле те калаймăн Сире. Мăшăрупа иксĕр 824 тенкĕпе пурăнатăр. Лайăх сăрăн пĕр тюбикĕ те 70—90 тенкĕ тăрать, рамки çеç 200—300 тенкĕ. Пенси укçи пĕчĕк ӳкерчĕк тума та çитеймест-çке...**

— Мĕнех тăвайăн, художник паянхи кун çапла пурăнать. Алăра çĕршер пин доллар тăракан ӳкерчĕксем пулсан та пуян мар эпĕ. Çĕршер çултан манăн ĕçсене коллекционерсем пысăк укçа парса илĕç. Пире паян ăнланманни темех мар. Çăкăрпа тăвар пӳлтăр сĕтел çинче. Пур енĕпе те перекетлеме тивет. Ялти тăвансем пулăшаççĕ — Елчĕк салинчен эпĕ. Раççейри ытти çынсем пекех, пирĕн те арăмпа пĕрле пурнăçа хăнăхса пыма тивет.

**— Сире гений тесе те шутлаççĕ. Гений вăл турăпа пĕр тан çын, тĕлĕнмелле ăслă та пултаруллă вăл, турă пӳрни пур унта. Гений тени пирки мĕн каланă пулăттăр?**

— Шутлакансем шутлаччăр... «Çапла» тесе каласан, теприсен кĕвĕçнипе çурăлса кайĕç. Шел вĕсене.

**— Художник пулнă май, хăвăрăн «вилĕмсĕрлĕхе» ĕненетĕр-и?**

— Эпĕ чун вилĕмсĕррине ĕненетĕп. Çакна ăнланма çăмăлах мар, вăл пирĕн ăс-хакăлран çӳллĕре... шайра тăрать. Материалистсен шухăшĕсене çурма тĕрĕс тетĕп. Ча... часах тĕслĕ тĕлĕксем куратăп. Манăн чунăм хамăн ӳкерчĕксенче юлĕ.

**— Халĕ турра ĕненесси модăра. Пур çĕрте те чиркӳ хăпартаççĕ. Пурнăç тĕллевне çухатнă çынсем турра ĕненнинче çăлăнăç тупасшăн. Турă пирки мĕнле шухăшлатăр Эсир?**

— Ачаранпах нимĕнле модăсăр... рах çĕр-аннене ĕненсе ӳснĕ. Çут çанталăк пĕтĕмпех шайлашуллă, ăнсăртлăх çук унта. Эпир вара — çынсем анчах. Тепĕр чухне çапла та шухăшлатăп: шăнаран хăш ен... чен лайăхрах-ха эпĕ? Вĕсем те у... кӳреççĕ, чечексене шăркаланта... раççĕ. Пачăшкăсене тата чиркĕве ĕненместĕп вара. Вĕсем те пирĕн пекех чĕрĕ чунсем. Чиркӳ общество пурнăçне лăпкăлăх кӳрет пулин те, вĕсем çав-çавах халăх шучĕпе пурăнма тăрăшаççĕ.

**— Ӳнер произведенийĕн чăн хакне епле палăртаççĕ?**

— Кирек мĕнле ӳнер ĕçне ил — унăн хакне палăртма-виçме çук. Шел пулин те, вĕсене сутма тивет. Ӳнерçĕн те çиес килет, пурнăç хăй ăна ӳкерчĕке хак пама хистет. Туянаканĕпе мĕнле калаçса татăлан ĕнтĕ, кампа мĕнлерех...

**— Сюрреализм пирки Эсир мĕн шухăшлатăр?**

— Эпĕ ытларах реализм енĕпе ĕçлетĕп.

Сюрреализма хисеплетĕп. Çав ӳкерчĕксене ӳнерçĕ чунĕн пысăк пайĕ куçнăн туйăнать. Тепĕр чухне хам та сюрреализм мелĕсемпе усă куратăп, мĕншĕн тесен пур япаланах реализм урлă кăтартма май çук.

**— Эпĕ чылай ӳнерçĕн «лаççинче» пулса курнă. Вĕсен пурин те стенисем ӳкерчĕксемпе тулнă, Сирĕн вара йĕри-тавра пуш-пушă. Мольберт çинче çеç эсир халĕ ĕçлекен пĕртен-пĕр ӳкерчĕк...**

— Вĕсем чăрмантараççĕ çеç, çавăнпа çук та. Ĕçленĕ чухне ют çынсăсем те, япаласем те чăрмав кўреççĕ, шухăшран пăрса яраççĕ. Художникăн вара пĕр ўкерчĕкпе тимлесе ĕçлемелле, ăна лайăхлатма пымалла.

**— Чи çўллĕ шайри пахалăх е «совершенство» тенине Эсир мĕнле куратăр?**

— Ку хăвăн çитменлĕхўсене курма пĕлни, йăнăшсене тўрлетни, хăвна хăв тĕрĕс хаклани, малалла аталанса пыни ўнерçĕн те пĕр ўкерчĕкпе çеç лармалла мар, чун та, ўт-пў те кану ыйтать.

**— Пĕр ўкерчĕкпе нумай вăхăт ĕçлетĕр-и?**

— Хăçан мĕнле. Пысăк ўкерчĕксем, паллах, нумай вăхăт илеççĕ.

**— Сирĕн ўкерчĕксем нумай-и?**

— Питĕ нумай. Живописçре, графикăра — вĕççĕршер ĕç, карикатурăсемпе иллюстрацисем 10 пин ытла. Çапах та художникăн пурнăçра пĕрре те пулин чăн-чăн ўкерчĕк тумалла тесе шутлатăп. Çапла пултарайсан, эсĕ çăкăр ахаль çимен, çут çанталăк умĕнче те айăпра мар.

**— Пур-и Сирĕн ун пек ĕçсем?**

— Кăна вăхăт кăтартĕ. Лайăх ўкерчĕке йĕркеллĕ, таса çын алли çеç тăваять. Эпĕ çакна ăнлантăм. Халиччен пĕр пўтсĕр те йĕркеллĕ картина ăсталайман. Чăн-чăн ўнерçе халăх ĕненме тивĕç. Турă панă çынсем вĕсем.

**— Талăкăн хăш вăхăтĕнче ĕçлеме кăмăллăрах?**

— Мастерскойра чухне кăнтăр иртни виçĕ сехетчен. Çут çанталăка тухсан каç енне меллĕ — ун чухне тĕссен çăралăхĕ пуянрах, илемлĕрех.

**— Мĕнле тĕссене ытларах килĕштеретĕр?**

— Чăваш тĕсĕсене.

**— Пулаççĕ-и вара ун пеккисем?**

— Çапла, пур тĕссен çавăн пек килĕшĕвĕ. Ку вăл — тĕксĕм-хĕрлĕхăмăр, шуранка-сарă, шуранкахăмăр, шуранка-сăрă, хура-сăрă, шуранка-кĕренрех сарă. Тĕссем мĕнлерех пуласси чи малтанах чăваш халăхĕ çав вăхăтра хăш вырăнта пулнипе çыхăннă. Кашни халăхăнах хăйĕн тĕсĕсем. Çакăнтан килет те наци искусствин уйрăмлăхĕ. Искусство пĕтĕм этемлĕх ăнланăвĕпе çыхăннă пулин те, наци уйрăмлăхĕсем çав-çавах пур.

**— Паллă çынсем пирки шўтсем çўреççĕ. Сирĕн пирки мĕнлерех?**

— Халăх художникĕ Немцев, тĕксе илсе, шўтлеме юрататать. Вун пилĕк çул каялла Мускава Хаммер коллекционерăн выставкине кайрăм. Билетсем çуккипе лекейменрĕм унта. Немцев вара эпĕ унта «Хамăр ял» выставкăна шыранă, анчах тупаймасăрах каялла таврăннă тесе шўтлетчĕ.

**— Чаплă художниксен ĕçĕсене мĕнле хаклатăр?**

— Эпĕ вĕсене питĕ хисеплетĕп. Ĕçĕсем чун-чĕрене пырса тивнипе куççуль тухни те пулать.

**— Кашни искусствовед картина шухăшне хăй ăнланнă пек хаклать. Тепĕр чухне художник пачах шухăшламаннине те хушса хурать.**

— Кун пек тĕслĕхсем çителĕклех. Илер-ха Рембрандтăн «Каскăн ывăл таврăнни» («Возвращение блудного сына») ĕçне. Тишкеререх пăхсан, эпĕ художник чунне туйса илтĕм. Хăйĕн «каскăн ывăлне» ўкернĕ чухне Рембрандт чи малтанах хăйне шута илнĕ. Вăл ĕмĕрсем урлă пире: «Эпĕ манăçлăхран тухрăм, тĕнчере пурăнса куртăм, пурнăçа пĕлсе çитрĕм, халĕ каллех ĕмĕрлĕхе таврăнатăп», тесе калать. Çакна вăл пайăркасен йĕрĕпе палăртнă, куртăм эпĕ çакна. Çутă çуталать те сўнсе пырать. Искусствоведсем вара картинăри Библи сюжетне çеç кураççĕ. Ку вăл пысăк йăнăш. Ўнерçе ўнерçĕ çеç ăнланма пултарать.

**— Çакăн пекки тахçан унччен те Сирĕнпе пулнă туйăма асăрхаман-и?**

— Кун пирки калама та аван мар. Пĕррехинче эпĕ Пушкин музейĕнче пуçласа Веласкесăн «Кĕнеке вулакан карлик» картинине курнăччĕ. Ун чухне мана çав картинăна хам ўкернĕ пек туйăнса кайрĕ. Тахçанах, иртнĕ вăхăтра. Сăрă хунă кашни йĕр хамăн пек туйăнчĕ, урăх никам та мар. Çав картинăн асамлă вăйĕнчен ниепле те тĕлĕнме пăрахаймастăп. Çавăн пеккине художниксенчен нумайăшĕ туяççĕ.

**— Ўнерçĕн сăрă хунă кашни йĕрпех ўсмелле тенипе килĕшетĕр-и?**

— Виçĕ çул каялла Никита Бичуринăн портретне ўкертĕм. Пĕр ирхине унăн сăнĕнче темĕн улăштарас кăмăл çуралчĕ. Бичурин çавăн чухне мана чĕрĕ куçсемпе тинкернĕн, чĕрĕ çынна сăрăпа тĕкме хатĕрленнĕшĕн ўпкеленĕ пек туйăнса кайрĕ. Тĕлĕннипе диван çине кайса выртрăм, ухмаха ернĕн туйăнчĕ. Мăшăрăм Алевтина та, каярах мастерскоя кĕнĕскер, çакна асăрхарĕ. Чăннипех те чăн-чăн картинăсен пурнăçри чĕрĕ ўкерчĕк пек курăнмалла. Çакă вĕсене вилĕмсĕр ĕçсен шайне çĕклет. Психологсем çакна курав вăхăтĕнчи медитаци пулăмĕпе ăнлантараççĕ. Ку вара халлĕхе пирĕншĕн ăнланмалла мар пулăм.

**— Вилсе чĕрĕлме май пулсан, Эсир ўнерçех пулăттăрччĕ-и?**

— Манпа кун пек тĕлĕнтермĕш пулсан, эпĕ татса паман ыйтусемпе малалла ĕçлеттĕм.

**— Мĕнле ыйтăва хурав парас килет?**

— «Вĕренекенсем пур-и сирĕн?» тенине. Тўрремĕнех калатăп: «çук». Çынна вĕрентсе хăварма йывăр. Пĕр çамрăк пурччĕ, анчах ăнланса пĕтереймерĕ вăл мана. Кашни художникăн ăсталăх патне хăйĕн çулĕпе çитмелле. Панулмине çыртса пăхмасăр унăн тутине пĕлеймĕн.

**— Мĕнле шутлатăр, чăваш халăхĕн ĕмĕрĕ вăрăм-и, вăл тата нумай пурăнĕ-и?**

— Чăваш ялĕ пĕтмесĕр, чăваш халăхĕ те пĕтмĕ. Хула национальноса аркатса пырать. Тăван çĕре, яла çывăхрах пулмалла. Вăй-хăват, çирĕплĕх пĕтĕмпех унра.

**— «Тăван Атăл» вулаканĕсене мĕн суннă пулăттăр?**

— Ĕçе яланах юратса тăвăр. Чун тасалăхне ан çухатăр, хăвăр шăпа хуçи хăвăр пулăр, пĕр вырăнта тапăртатса ан тăрăр, ăсчахсене тимлĕр.

**— Тавтапуç интереслĕ калаçушăн, чуна уçса панишĕн. Нумай-нумай çуллăха телей тата сывлăх Сире. Татах та татах вилĕмсĕр картинăсем ўкерме ăнăçу сунатăп.**

**Альбина ЮРАТУ калаçнă.**
**Вырăсларан Алина ШЕРНЕПЕ**
**Елена ШКОЛЬНИКОВА**
**куçарнă.**